Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

102 (7956) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 17-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## 2 миллион тенкĕлĕх ытла



*Шăпах çакăн чухлĕ продукци реализацилет куллен район центрĕнче вырнаçнă «Центральный» магазин коллективĕ. Коллектива пултаруллă ĕçчен, суту-илӳре 22 çул вăй хурса пуян опыт пухнă Алина Онькова ертсе пырать (сăн ӳкерчĕкре сулахайри). Елена Кириллова, Оксана Морозова, Надежда Мироваева та ĕçре тăрăшуллă, тавар туянакансемпе вашават. Вĕсем те суту-илӳ ĕçĕнче пĕрремĕш çул мар. Пĕтĕмĕшле çакăнтан килет те ĕнтĕ ăнăçу та, ĕçри ӳсĕм те.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Михаил Игнатьев: «Çынсен шанăçне тӳрре кăларас пулать»

Декабрĕн 15-мĕшĕнче республика Патшалăх Канашĕн çĕнĕрен суйланă йышĕ хăйĕн ĕçне пуçăннă. «Чăваш Ен çыннисем хăйсен сассисене сирĕншĕн панă. Апла пулсан вĕсем сирĕн çине пысăк шанăç хураççĕ. Сирĕн задача – вĕсен шанăçне тӳрре кăларасси, депутатăн пысăк ятне çӳлте тытасси. Эсир – халăх суйланă çынсем». Çапла пуçланă хăйĕн сăмахне Чăваш Республикин Президенчĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашĕн пиллĕкмĕш созыври пĕрремĕш йĕркелӳ сессийĕнче.

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх суйлав итогĕсем çавна çирĕплетеççĕ: малашне те çынсен тупăшне ӳстерессипе, вĕрентӳ пахалăхне лайăхлатассипе, медицина услугисене пуриншĕн те меллĕ тăвассипе, коммуналлă услугăсен пахалăхне лайăхлатса пырассипе, ĕç вырăнĕсем йĕркелессипе, ĕç укçи тӳлессин парăмĕсене пĕтерессипе çине тăрса ĕçлемелле. «Пурте эсир суйлав умĕнхи хĕрӳ тапхăр витĕр тухнă, çынсемпе калаçнă, вĕсен проблемисем пирки итленĕ, хуравсем панă. Сирĕнтен çине тăрсах çапла ыйтатăп: хăвăрăн шантарса каланă сăмахăрсем пирки манса ан кайăр. Суйлав умĕн мĕн калани хăвăрт манăçа тухать тесе шухăшлакан политиксем йăнăшаççĕ»,– тенĕ Президент.

Республика Президенчĕ Парламентри пур политика вăйĕсемпе те тачă çыхăнса ĕçлессине пĕлтернĕ. Ĕçлĕ сĕнӳсене шута хуманни вырăнлă мар.

Патшалăх Канашĕнчи депутатсен çĕнĕ йышĕ 44 çынран тăрать. Вĕсенчен 33-шĕ – «Единая Россия» парти членĕсем, 4-шĕ – КПРФ, 5-шĕ – «Справедливая Россия», 2-шĕ – ЛДПР представителĕсем. Ытларах сасă пухнă май Чăваш Республикин саккунсем йышăнакан чи аслă органĕн председателĕ пулма Юрий Попова суйланă. Униăн 36 çын сасăланă. «Эпĕ политикăра çĕнĕ çын. Анчах та Чăваш Ене чунтан юрататăп. Çавăнпа та республика ăнăçлăхĕшĕн хамран мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшăп», – палăртнă Юрий Попов ĕçтешĕсене хăйне шаннăшăн тав тунă май.

Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Чăваш Ен Президенчĕ пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Канашĕ тухăçлă ĕçлессе шантарнă. «Ĕçлеме пултаракан Парламент йĕркеленчĕ. Саккунсем йышăнакан çĕнĕ органпа эпир малашне килĕштерсе ĕçлесе пырасса шанатăп. Çакă чи малтанах Чăваш Енре пурăнакан нумай наци çыннисен ырлăх-пурлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ. Юрий Попов – пирĕн çын, вăл республикăна пĕлет, çынсен ĕмĕтшанăçĕ те уншăн ют мар», – тенĕ Президент.

## Пĕр уйăх кăна юлать

***Районăн экономикăпа социаллă аталану итогĕсем кăçалхи январь–ноябрь уйăхĕсенче***

**ДЕМОГРАФИ ЛАРУ-ТĂРĂВĔ**

Çулталăк пуçланнăранпа кăçал районĕпе 374 ача çуралнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 6 ача сахалрах. Вилекенсем 527 çын пулнă. Иртнĕ çул ку тапхăрта 608 çын вилнĕччĕ е 81 çын нумайрах.

**ПРОМЫШЛЕННОСТЬ**

Промышленность тата пулăшу паракан предприятисем кăçал вун пĕр уйăхра 1483705,4 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан ку вăл 145,1 процент пулать. Иртнĕ çулхинчен ӳсĕмлĕрех ĕçлекеннисем – «Сундырь–Хлеб» ООО (34872 пин тенкĕлĕх е 109,9 процент), «Моргаушавтотехсервис» ОАО (4443 пин тенкĕлĕх е 100,1 процент), «Сеспель» ЗАО (1010518 пин тенкĕлĕх е 186,7 процент), «Моргауши–Хлеб» ООО (24567 пин тенкĕлĕх е 117 процент), «Моргаушское» ЖКХ (21310,8 пин тенкĕлĕх е 117 процент), «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ (62043 пин тенкĕлĕх е 120,4 процент), ытти предприятисем (115632,7 пин тенкĕлĕх е 116,4 процент).

**ТӲЛЕВЛĔ ПУЛĂШУ ПАРАССИ**

Çынсене тӳлевлĕ пулăшу парасси унччченхинчен 6,5 процент ӳснĕ. Пĕтĕмпе вара 69463,3 пин тенкĕлĕх тĕрлĕ услугăсем пурнăçланă. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ 20257,9 пин тенкĕлĕх (104,4 процент), «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ 16488 пин тенкĕлĕх (108,5 процент), çав вăхăтрах «Моргаушрайбыт» ООО 1112,1 пин тенкĕлĕх (85,9 процент) пулăшу ĕçĕсем пурнăçлама пултарнă.

**ВАККĂН ТАВАР СУТАССИ**

Иртнĕ тапхăрта ваккăн тавар сутассин калăпăшĕ Мăн Сĕнтĕр райповĕпе 228827 пин тенкĕпе (114,7 процент), Муркаш райповĕпе 408996,5 пин тенкĕпе (115,8 процент), ытти йышши предприятисемпе 67518 пин тенкĕпе (117 процент) танлашнă. Районĕпе кăçал пĕтĕмпе 705341,5 пин тенкĕлĕх е пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 15,6 процент нумайрах тавар сутнă.

**Э. СИМАКОВА, район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Грипп чирне хирĕç

## Вакцина хальлĕхе пур

Специалистсем грипп чирĕ январь-февраль уйăхĕсенче «çитессине» пĕлтереççĕ. Апла эпир халĕ унран асăрханма кая юлман.

Муркашри тĕп больницăран пĕлтернĕ тăрăх унта «гриппол» вакцина (аслисем валли) пур-ха. Грипран прививка туни – çак чире асăрхаттаракан чи хăватлă мел пулнине специалистсем тăтăшах пĕлтереççĕ. Çавăнпа та гриппа чирлес мар текенсем больница поликлиникин 7-мĕш пӳлĕмне пырса прививка тутарттарма пултараççĕ (вакцина тӳлевлĕ). Прививка тунă хыççăн тепĕр 8–10 кунран организма грипп чирĕнчен хӳтĕлекен вăй аталанса çитет, 12 уйăха яхăн пырать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Блиц-интервью

## Компенсаци куçасси ашшĕ-амăшĕнчен килет

***Раççей Федерацийĕн Правительствин 2006 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче кăларнă 849 № Постановленийĕпе килĕшӳллĕн ачана садика янăшăн компенсаци параççĕ. Компенсаци ашшĕ-амăшĕ патне мĕнле «хăвăртлăхпа» таврăнать? Ку ыйтăва район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхне З.Ю. ДИПЛОМАТОВĂНА хуравлама ыйтрăмăр.***

– Ачана шкулччченхи вĕрентӳ учрежденийĕнче тытса тăнăшăн ашшĕ-амăшĕ кашни уйăхрах укçа тӳлесе тăма тивĕç. Вĕсем тӳленĕ укçа калăпăшĕн пĕр пайĕ халĕ каялла компенсаци мелĕпе таврăнать: пĕрремĕш ачашăн тӳлевĕн 20 процентне, иккĕмĕш ачашăн – 50 процентне, виççĕмĕш ачашăн – 70 процент таранах каялла таварса параççĕ. Ку пысăк пулăшу.

Çак компенсаци ашшĕ-амăшĕн ятарлă счечĕ çине куçса пырать. Счета Перекет банкĕнче уçмалла. Компенсацие ятарлă карттă çинчен е перекет кĕнекипе илсе тăма пулать. Счет номерĕ улшăнчĕ пулсан çийĕнчех ача сачĕн ертӳçине пĕлтермелле. Çапла вара нимĕнле ăнланса çитменни те, тавлашу пуçарма пултаракан самант та пулмасть.

Компенсаци укçине палăртнă йĕрке тăрăх кашни уйăхрах счет çине куçараççĕ. Анчах та ашшĕ-амăшĕн васкавлăхĕнчен нумай килет. Вĕсем ачана садикра тытса тăнăшăн уйăхсерен тӳлемелли укçана вăхăтра тӳлесе пыраççĕ пулсан компенсаци те счет çине вăхăтра куçса пырать.

Тата тепĕр самант пирки те каласа хăвармалла. Ашшĕ-амăшĕ укçа вăхăтра тӳлесе тăни садикра вĕсен ачисем йĕркеллĕ апатланасси çине тӳрремĕнех витĕм кӳрет. Укçа садикăн счечĕ çине куçать-çке-ха. Çапла вара ача шăпи тата патшалăх пулăшăвĕ пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. Çакна ашшĕ-амăшĕ ăнланасса шанатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Налук инспекцийĕнчен хыпарлаççĕ

## Çĕнĕ çула парăмсăр кĕтсе илер

Кăçал 11 уйăхра пур шайри бюджетсене районĕпе 158576 пин тенкĕ тӳлев куçнă. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ку вăл 119 процент пулать. Вăл шутран федераллă бюджета 7577 пин тенкĕ (64 процент), республика бюджетне 70220 пин тенкĕ (155 процент), вырăнти бюджета 80779 пин тенкĕ (106 процент) куçарнă. Пĕтĕм тӳлевсен шутĕнче уйрăм çынсенчен илекен налук 52 процент, тупăшран илекен налук 14 процент, организацисен пурлăхĕнчен илекен налук 12 процент, вмененнăй тупăшран илекен пĕрлехи налук 5 процент, транспорт налукĕ 5 процент, çĕр налукĕ 3 процент.

Çулталăк пуçланнăранпа налук тӳлевĕсем енĕпе парăм 5938 пин тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ е 44 процент, декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 19535 пин тенкĕпе танлашрĕ. Ку суммăран 128 предприяти парăмĕ 12174 пин тенкĕпе танлашать е пĕтĕм суммăн 62 проценчĕ. 111 предпринимателĕн парăмĕ 4529 пин тенкĕ, 4940 уйрăм çыннăн пурлăх налукĕн парăмĕ 2832 пин тенкĕ. Кунсăр пуçне 25 организаци уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налука 3700 пин тенкĕ куçарса паман.

Налуксене вăхăтра тата туллин тӳлесе тăрасси социаллă пĕлтерĕшлĕ шутланать. Вĕсем çынсене пенсипе вăхăтра тивĕçтерессипе, социаллă тата медицина пулăшăвĕ парассипе, вырăнти тата республика шайĕнчи наци проекчĕсене пурнăçлассипе çыхăннă. Çавăнпа та парăм авăрне çакланас марччĕ, пенисемпе пошлинăсем тӳлесе тăкакланас марччĕ. Парăмсене вара парса татмаллах пулать.

Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ налук тӳлекенсене пурне те çитсе килекен Çĕнĕ 2012 çул тата Сурхури уявĕ ячĕпе саламлать. Пурсăра та сире сывлăх, телей, çемйĕрсенче ăнăçу тата укçа-тенкĕ тĕлĕшпе ӳсĕм сунатпăр. Яланах сирĕн килте хăтлă, хаваслă та çутă пултăр. 2011 çулшăн налуксене вăхăтра тӳлесе татасса, Çĕнĕ çул уявне парăмсемсĕр кĕтсе илессе шанса тăратпăр.

**И. ШОРОНОВА, налук инспекцийĕн пай пуçлăхĕ.**

Саламлатпăр



Хисеплĕ те хаклă аннене, юратнă хунямана, кукамая, асаннене, тăвана – Платкасси ялĕнче пурăнакан **Нина Николаевна ТИМОФЕЕВĂНА** раштавăн 20-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Юратнă ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 12 мăнукĕ, 14 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**



Çĕр çинчи чи хаклă çыннăмăра, юратнă та хисеплĕ аннемĕре, кукамая, асаннене – Мăн Тутаркас ялĕнче пурăнакан **Римма Васильевна ПЕТРОВĂНА** паян 80 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

Тулăх пултăр пурнăç сан ялан,
Сывлăх ан хавшатăр нихăçан.
Ыр сунатпăр сана кăмăлтан,
Эсĕ хаклă пире ылтăнран.

**Чун-чĕререн хисеплесе: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, 15 мăнукĕ, 9 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем, кӳршисем.**

# Юридици пулăшăвĕ камшăн тӳлевсĕр пулĕ?

**Актуаллă ыйтусемпе**

*Журналист ыйтăвĕсем çине Чăваш Республикин юстици министрĕ Н.В. ПРОКОПЬЕВА хуравлать*

**– Надежда Викторовна, çынсене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси паян уйрăмах актуаллă ыйту шутланать. Ăнлантарса парăр-ха, тархасшăн, мĕнле юридици пулăшăвĕпе усă курма пултарĕç Чăваш Республикинче пурăнакансем?**

– Чăнах та паянхи кун çынсене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси актуаллă пулса тăрать. Юристсене кăна мар, кашнинех ку е вăл право нормисене пĕлни, вĕсемпе усă курма пултарни кирлĕ.

Чăваш Республикин территорийĕнче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассине Раççей Федерацийĕн территори патшалăх влаç органĕсене явăçтарнă. Пулăшу формисем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Кусем вĕсем консультацисем, документсен проекчĕсене, иск заявленийĕсене хатĕрлесси, гражданла тата уголовлă суд производствинче граждансен интересĕсене хӳтĕлесси.

**– Надежда Викторовна, ăнлантарса парсамăр. Мĕнле категорие кĕрекен çынсене адвокатсем тӳлевсĕр пулăшу пама тивĕç?**

– «Раççей Федерацийĕнчи адвокат ĕçĕ-хĕлĕ тата адвокатура çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн адвокатсем чи малтанах социаллă хӳтлĕхсĕр çынсене тӳлевсĕр пулăшаççĕ – чухăнраххисене, алимент шыраса илес текен истецсене, çемьере тăрантаракан вилнĕ, ĕçре аманса сусăрланнă е сывлăхне хавшатнă пулсан кӳнĕ сиене саплаштарма чухне, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене, Раççей Федерацийĕн политика репрессийĕсене пула шар курнă гражданĕсене, пенсионерсене, çул çитменнисене, енчен те вĕсем асăрхаса-пăхса тăманнисен тата правăна пăсас енне сулăннă çул çитмен çамрăксен профилактикин системин учрежденийĕсенче пулсан.

Çавна та каласа хăварасшăн. Хальхи вăхăтра тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илес пулсан адвокат патне илсе пымалли документсен шучĕ пĕчĕкех мар. Юлашки вăхăтра ЧР Юстици министерстви кирлĕ документсем пухассин процедурине ансатлатассипе ĕçлет.

**– Эсир каларăр, республика влаç органĕсем тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассипе ĕçлеççĕ. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх эсир, ĕç тăвакан влаç органĕн ертӳçи пулнă май, кварталсерен граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнассине йĕркеленĕ. Кун пирки тĕплĕнрех каласа парсамăр?**

– Чăнах та, республика Юстици министерстви тӳлевсĕр майпа тĕрлĕ енлĕ юридици пулăшăвĕ парать. Чи анлă сарăлни кунта – граждансем пирĕн сайт çине хăйсен ыйтăвĕсене вырнаçтарни. Министерство ку енĕпе законодательство йĕркисене ăнлантарса парать.

Тепĕр форма – граждансене хăйсене интереслентерекен ыйтăвĕсемпе йышăнасси. Кашни тунти кун эпĕ 15 сехетрен тытăнса 17 сехетчен граждансене хам патра йышăнатăп. Ку официаллă. Практикăра вара куллен тенĕ пекех тĕрлĕ ыйтусемпе пыракансем çук мар. Вĕсене хурав памасăр кăларса ямастпăр. Виçĕ уйăхра пĕр хут граждансене ЧР Президентчĕн Администрацийĕн общественăлла йышăну пӳлĕмĕнче йышăнатăп. Йышăну графикĕ республика хаçачĕсенче пичетленет. Çавăн пекех Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Председателĕн В.В. Путинăн Чăваш Республикинчи общественăлла йышăну пӳлĕмĕнче те виçĕ уйăхра пĕр хут граждансене йышăнатăп.

**– Çынсем сирĕн пата мĕнле ыйтусемпе ытларах пыраççĕ-ха?**

– Тĕп ыйтусем – граждансене социаллă пулăшу парассипе, пенсипе тивĕçтерессипе, суд акчĕсене пăрахăçлассипе çыхăннисем.

**– Надежда Викторовна, граждансем Чăваш Республикин Юстици министерствине юридици пулăшăвĕ илме пултараççĕ-и?**

– Паллах, эпĕ ун пирки асăнтăм ĕнтĕ. Пулăшу илмелли меллесем тĕрлĕрен: çырупа тухса та, электронлă документпа та, телефонпа та, йышăнăва килсе те.

**– Надежда Викторовна, 2011 çулхи июнь уйăхĕнче РФ Патшалăх Думине «Раççей Федерацийĕнче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси çинчен» Федераллă саккун проектне пăхса тухма тăратнă. Асăннă саккун проектĕнче граждансен хăш категорийĕсене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ пама палăртаççĕ?**

– Пур йышши юридици пулăшăвне те тӳлевсĕр пама тивĕçлисен шутне çаксене кĕртме палăртнă:

– чухăнрах пурăнакан граждансене (çемьери кашни çын пуçне тивĕçекен тупăш шайĕ Раççей Федерацийĕнче палăртнă пурăнма кирлĕ минимум чухлĕ çук пулсан);

– пĕрремĕшпе иккĕмĕш ушкăн инваличĕсене;

– Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене, Раççей Федерацийĕн Геройĕсене, Совет Союзĕн Геройĕсене, Социализмла Ĕç Геройĕсене;

– инвалид ачасене, ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă ачасене тата вĕсен представителĕсене, енчен те вĕсем çак ачасен саккунлă прависемпе интересĕсене хӳтĕлессин ыйтăвĕсемпе пыраççĕ пулсан;

– ватă çынсене (55 çултан аслăрах хĕрарăмсемпе 60 çул урлă каçнă арçынсене);

– асăрхаса-пăхса тăманнисен тата правăна пăсас енне сулăннă çул çитмен çамрăксен профилактикин системин учрежденийĕсенче тытса усракансене тата вĕсен представителĕсене, енчен те вĕсем çак çул çитменнисен саккунлă прависемпе интересĕсене хӳтĕлессин ыйтăвĕсемпе пыраççĕ пулсан т. ыт. те.

**– Çак ыйту та кăсăклă. Саккун проектĕнче палăртнă тăрăх тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси адвокатсене пырса тивет. Кунта ыйту çуралать: гражданин тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илме пур адвокат патне те пыма пултарать-и?**

– Саккун проектĕнче кун пирки калани пур. Адвокатсен палати тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ паракан адвокатсен списокне туса хатĕрлет. Çулсерен декабрĕн 31-мĕшĕнчен кая юлмасăр кун пек адвокатсен списокне массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлĕç тата Интернетăн информацие телекоммуникаци сетĕнче вырнаçтарĕç.

**– Надежда Викторовна, юлашки ыйту. «Раççей Федерацийĕнче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси çинчен» Федераллă саккуна хăçан йышăнĕç-ха?**

– 2011 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думи саккун проектне виççĕмĕш вулавпа ырларĕ. Çывăх вăхăтрах ăна йышăнма тивĕç тесе шутлатăп.

# Малалла вăхăтра тĕрĕс утăм тумалла пултăр

***Декабрĕн 12-мĕшĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 13-мĕш ларăвĕ иртрĕ. Унта пĕрремĕш ыйтупа РФ Патшалăх Думин, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн, çавăн пекех 1-мĕш номерлĕ пĕр мандатлă Октябрь суйлав округĕнче депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕн тата 5-мĕш номерлĕ пĕр мандатлă Якаткасси суйлав округĕнче Чуманкасси ял тăрăхĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕн хушма суйлавĕн пĕтĕмлетĕвĕсене (вулакансене суйлав пĕтĕмлетĕвĕсемпе хаçатăн декабрĕн 10-мĕшĕнчи номерĕнче паллаштарнăччĕ) пăхса тухрĕç. Халĕ сире район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов депутатсен районти Пухăвĕнче тухса каланин хăш-пĕр вырăнĕсемпе паллаштаратпăр:***

– Хисеплĕ депутатсем, Пухăва чĕннисем!

Муркаш районĕн территори суйлав комиссийĕн председателĕ Л.Ю. Тарасова халь кăна сире декабрĕн 4-мĕшĕнче иртнĕ суйлав пĕтĕмлетĕвĕсемпе паллаштарчĕ. Суйлав пĕтĕмлетĕвĕсем пирки тĕрлĕрен шухăшлама пулать. Ку ыйтупа çĕр-шыва тата республикăна ертсе пыракансем официаллă майпа хăйсен шухăшĕсене пĕлтерчĕç. Кун пирки кашнин хăйĕн шухăшĕ пулĕ. Мана вара, хам «Единая Россия» политика партийĕн вырăнти политканашăн ертӳçи пулнă май та, çавăн пекех хам гражданин пулнă май та, хамăр районта суйлавра сасăланин пĕтĕмлетĕвĕсем тивĕçтермеççĕ. Партин ку таранччен тунă ĕçĕсем тата малашлăхра мĕн тумалли çинчен эпир суйлавçăсемшĕн ăнланмалла каласа парайманнипе, çакăн çинчен вĕсен чунĕсри патне çитмелле çирĕппĕн ăнлантарайманнипе, каланине кирлĕ таран тĕс-лĕхсемпе çирĕплетсе çитерейменнипе çакăн пек пулса тухрĕ. Кăна пирĕн йышăнмаллах.

Халĕ эпĕ партин политканашĕн ларăвĕнче мар, депутатсен районти Пухăвĕнче тухса калаçнине шута илсе, хам çинчен калăп. Суйлав кампани вăхăтĕнче эпĕ, кашни ял тăрăхĕнче пулса, халăхпа тĕл пулса калаçрăм, кашни ĕç коллективĕнче пултăм. Тĕл пулусенче халиччен мĕн туни, татса памалли ыйтусем çинчен уççăн тата тĕрĕссине каларăм. 2006 çулхи Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен, 2007 çулхи РФ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕсем экономика çирĕпленсе пынă вăхăтра пулса иртрĕç. Вăл вăхăтра нумай ыйтусене татса пама май килчĕ, уйрăмах – çул тăвассипе çыхăннă ыйтусене те. 2008 çулхи кризис хыççăн вара ку ыйтупа пысăк улшăнусемех тăваймарăмăр. Çавна май малтанхи суйлавсем умĕн татса паратпăр, тенĕ ыйтусем татăлаймарĕç.

Пĕлетĕп, нумай çул хушши пуçтарăннă ыйтусене татса парайманни халăха канăçсăрлантарать, тарăхтарать те. Çавăнпа та эпĕ вĕсем çинчен уççăн тата тĕрĕссине каларăм. Çавăнпа пĕрлех тĕл пулусенче эпĕ çав йывăр ыйтусене суйлав урлă хăвăртрах татса пама май пурри çинчен ăнлантартăм. Района инвестици килсе кĕресси те паян тӳрремĕнех суйлавпа çыхăннă. Çакна Шăмăршă тата Патăрьел районĕсен тĕслĕхĕсем те уççăн кăтартса параççĕ. Влаç паян чи малтан вăхăтра хăйне пулăшакансене, ăнланакансене пулăшать. Шел, çакна пирĕн районта пурăнакансем ăнланаймарĕç.

Çынсем суйлавра хăйсем сасăласа çав йывăрлăхсене хăйсемех таранлатса пыни, хăйсем тунă утăмсемпех хăйсене кирлĕ ыйтусене пурнăçланма чăрмантарни маншăн ăнланмаллах мар.

Юлашки çулсенче район центрĕнче нумай ĕç туса ирттертĕмĕр. Унтан та ытларах, Муркаш республикăри чи лайăх район центрĕ пулса тăчĕ. Суйлавра вара хамăр мĕн туса хутăмăр? Мăн Сĕнтĕр хăй Турă ырлăхне те курасшăн пулнине, çав вăхăтрах усал сывлăшран та хăпасшăн маррине кăтартса пачĕ. Мĕнле-ха капла пулса тухать? Эпир хамăршăн хамăр тăшман мар вĕт-ха? Мĕншĕн эпир хамăр хамăра пулăшма тăрăшмастпăр? Ялти интеллигенци, бюджет сферин ĕçченĕсем, район активĕ, «Единая Россия» парти членĕсемпе ун майлисем суйлавçăсемпе ăнлантару ĕçне активлă тăваса шаннăччĕ. Суйлавçăсем ăнланасса ĕненнĕччĕ, шаннăччĕ. Тĕл пулусенче паянхи лару-тăру çинчен вĕсемпе уççăнах калаçнăччĕ. Анчах та шанăç тӳрре килмерĕ.

Районта пулса иртекен мĕн пур лару-тăрушăн пĕтĕмпех эпĕ хам яваплă пулса тăратăп. Айăплисене те шырамастăп эпĕ. Никам умне те вăл хăй йышăнакан должноçра ĕçлеме юрăхлипе юрăхлă марри çинчен те ыйту лартмастăп. Мĕншĕн тесен çын инкекĕ çинче инçе кайма çук. Хăй тунă утăм хăйĕн совеçĕ çинчех пултăр кашнин. Çавăнпа пĕрлех никама та хам хыççăн кайма сĕнместĕп.

Пытармастăп, юлашки 4 çул хушшинче пирĕн çĕр-шывра пулса иртекен улшăнусенчен нумайăшĕ маншăн ăнланмалла мар. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çинчен саккун та пур. Полномочисем те, мĕншĕн яваплă пулса тăни те паллă. Анчах вĕсене пурнăçлама уйăракан укçа-тенкĕ вара питĕ сахал. Пирĕн яланах тараннăн шухăшласа, пĕтĕм яваплăха туйса, пĕтĕм ĕçе пĕлсе тунă йышăнусем тĕп вырăнта пулнă.

Нумай вăхăт тараннăн шухăшланă хыççăн, уйрăмах декабрĕн 4-мĕшĕнчи суйлав пĕтĕмлетĕвĕсене тата республикăна ертсе пыракансем çав пĕтĕмлетӳсене критикăлла хак панине шута илсе эпĕ çакăн пек йышăну турăм: район администрацийĕн пуçлăхĕн полномочине вăхăт çитиччен пăрахатăп. Район пуçлăхĕ санаторинче сипленет, эпĕ вара декабрĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа – отпускра. Район Уставĕпе тата контрактпа килĕшӳллĕн эпĕ район пуçлăхĕ патне тивĕçлĕ заявленипе тухатăп. Сирĕнпе калаçса татăлмасăр, вăл тивĕçлĕ йышăну тумĕ, тесе шутлатăп. Çавăнпа та эпĕ паян хамăн йышăну пирки депутатсем умĕнче тухса калама шутларăм. Эсир эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн вырăнĕнчен вăхăт çитиччен хам ирĕкпех кайнине район пуçлăхне йышăнма сĕнессе шанатăп. Çак йышăну маншăн – хам мĕнле йышăну тунине пĕлсе тăрса тата тĕплĕн шухăшласа тунă йышăну. Ку ыйтăва сӳтсе явма та, сасăлама та ыйтмастăп. Хăвăр шăп ларнине эсир маншăн хам ыйтăва тивĕçтерни вырăнне хурса йышăнатăп.

Эпĕ тунă çак татăклă утăм районти халăхăн кашни сийне малалла вăхăтра тĕрĕс утăм тумалли, район интересĕшĕн, районăн пуласлăхĕшĕн пĕрлешсе пĕрле ĕçлемелли сăлтав пултăр.

Пурне те пĕрле ĕçленĕшĕн, ăнланнăшăн тата пулăшнăшăн тав тăватăп.

**С. Михайлов çуралнăранпа – 190 çул**

# Янтуш çинчен пĕлни савăнтарать

Раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнче Юнкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче тăван халăха ытти халăхсемпе тан правалла тăвасишĕн, унăн культурине хăпартассишĕн, ăна çутта кăларассишĕн нумай тăрăшнă Спиридон Михайлович Михайлов (Янтуш) çуралнăранпа 190 çул çитнине халалланă савăнăçлă уяв иртрĕ.

Спиридон Янтушăн ячĕ ытти ачасен асĕнче те юлтăр тесе уявччен маларах район тата республика шайĕнче тĕрлĕ конкурссем ирттертĕмĕр. «Нумай енлĕ талант» викторинăна иртерес ĕçре шкул библиотекипе ял библиотекин ĕçченĕсем яваплă пулчĕç. Жюри чăвашсен пĕрремĕш ăсчахĕн пурнăçĕпе ĕç-хĕлне ачасем аван пĕлнине çирĕплетрĕ. Кĕске хушăра пулин те, викторинăна районти вăтам тата тĕп шкулсенчи 21 ача хутшăнчĕ. Малти вырăнсене Надежда Кулмемина (Ильинка шкулĕ), Мария Сытина (Юнкă шкулĕ), Диана Мочалова (Çатракасси шкулĕ), Анжелика Кудашова (Шурча шкулĕ), Надежда Федорова (Москакасси шкулĕ) çĕнсе илчĕç.

«Спиридон Янтуш – чăваш хушшинчен тухнă чи пирвайхи писатель, этнограф, тата историк» ятлă видиороликсемпе презентацисен конкурсне те ачасем хастар хутшăнчĕç. Ку ĕçе чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Н.В. Шандимирова хăй çине илчĕ. Раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче хăйсен ĕçĕсене хӳтĕлеме Юнкăри вăтам шкула Сосновка, Шомик, Шатракасси, Шетмĕпуç, Москакасси, Юнка, Ильинка шкул ачисем пуçтарăнчĕç. Пурĕ 15 ĕç пăхса тухрĕ жюри. С.М. Михайлов ячĕллĕ Юнкăри вăтам шкул ачисем хăйсен тăрăхĕнчи ăсчах çинчен нумайрах пĕлнине кăтартрĕç, вĕсем пĕрремĕш (И. Шандимирова, А. Шандимиров) тата иккĕмĕш (М. Сытина) вырăнсене çĕнсе илчĕç. Виççĕмĕш вырăна Москакасси шкулĕ (Д. Димитриева) йышăнчĕ.

Пулас художниксем, ӳнер ăстисем те конкурсран аякра юлмарĕç. Пурĕ 38 ĕç тăратрĕç. Ӳнерçĕсен ĕçĕсене пăхса тухакан жюри членĕсем çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕç: 1 вырăн – Шомик шкулĕнче вĕренекен Н.Спиридонова, 2 вырăн – Муркашри пултарулăх çурчĕн ӳнерçи С. Димитриев, 3 вырăн – Москаккасси шкулĕнче вĕренекен Д. Димитриева.

«Миллион чăвашла сармăсран эп Раççейри пĕрремĕш çыравçă» интернет-олимпиадăна тулай тата Чăваш Енри тĕрлĕ районсенчи шкулсенче вĕренекен 374 ача хутшăнчĕ. Олимпиадăна иртерес ĕçе Н.В. Шандимирова тата В.В. Краснова йĕркелерĕç. Интернет-олимпиадăра малти вырăнсене çĕнсе илекенсем хушшинче Муркаш районĕнчи вĕренекенсем пурри чуна савăнтарать. С.М. Янтуш çинчен Çатракассинчи вăтам шкулта 8 класра вĕренекен Людмила Скворцова пуринчен те лайăх пĕлнине кăтартрĕ, пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ.

Юнкă шкулĕ С. Янтуша халалланă конкурссене хастар хутшăннă Шурча, Москакасси, Шатракасси, Сосновка, Шомик, Ильинка, Шетмĕпуç, Муркаш, Кашмаш шкулĕсенче вĕренекенсемпе вĕрентекенсене тав тăвать.

Çак мероприятие ирттерес ĕçре хăйсем çине пысăк яваплăх илнĕ Юнкăри вĕрентӳпе культура ĕçченĕсене (пуринчен ытла Н.В. Шандимирова, И.Н. Ветлугина, В.В. Краснова, Н.Г. Сильвестрова, Л.М. Кудряшова тăрăшнă) ял администрацийĕпе шкул администрацийĕ пысăк тав сăмахĕ калать.

**Юнкă шкул администрацийĕ.**

4 марта – выборы президента

# О предоставлении печатной площади

В соответствии с пунктом 9 статьи 51 Федерального закона «О выборах Президента Российской Федерации» редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» резервирует 5 процентов общего объема еженедельной печатной площади для опубликования предвыборных агитационных материалов.

В соответствии со статьей 53 Федерального закона «О выборах Президента Российской Федерации» редакция районной газеты предоставляет печатную площадь за плату. Стоимость 1 кв. см. печатной площади составляет 35 рублей.

**Редакция районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ».**

Шăпа

# Сăвви-юрри халăха тыткăнлать



Пирĕн хушăра тĕрлĕрен интереслĕ, анлă тавра курăмлă, унтан та пĕлтерĕшлĕрехxи, пурнăçа хаклама пĕлекен çынсем пурăнаççĕ. Çавăн йышшисенчен пĕри вăл – Татьяна Борисовна Васильева. Пултаруллă хĕрарăма тăтăшах тĕрлĕ сцена çинче, мероприятире курма пулать. Хăй хайланă сăвă йĕркисене шăрантарать, шăнкăр-шăнкăр сассипе юрă-кĕвĕ янратать, пултарулăхпа, илемпе куракана тыткăнлать, район тата республика шайĕнчи конкурссене те хутшăнать. Çамрăклăх çулĕсенчех искусство тĕнчине туртăннăскер баян, домбра тытма кăмăлланă. Çумра вара унăн яланах – хăй шăрçаланă сăвăсен пуххи. Мĕнрен пуçланчĕ-ха сăвă çырасси тесе кăсăклантăм эпĕ.

– Акă сирĕн умăрта манăн сăвăсен пуххи, ăна вара эпĕ тахçанах тултарма пуçланă. Сăвăсенчи хурлăх вара манăн шăпапа çыхăннă. Шел пулин те пурнăç урапи маншăн пĕр тикĕссĕн кусаймарĕ. Йывăр чир те хăй пирки тăтăш аса илтерчĕ, унпа пĕрлех ытти те, – хурлăхлăн пуçларĕ калаçăва Татьяна.

Шкултан хĕр ача аван вĕренсе тухать. Ĕмĕчĕсем вара ытла та пысăк пулнă çамрăкскерĕн, тĕлĕкре те ырри пирки кăна тĕлленнĕ. Çапла вара пурнăç çулĕ çине тăма хатĕрленнĕ хĕр ятарлă професси алла илет, Крыма ĕçлеме кайма палăртать, анчах...

– Шăпам вара урăхларах килсе тухрĕ, ĕмĕтĕм пĕр самантрах ирхи тĕтре евĕр сĕвĕрĕлчĕ. Çутă пуласлăха ĕненнĕччĕ те. Çапла вара этем çĕр çинче чи вăйли мар иккенне туйрăм, куртăм. Эпĕ ăнлантăм – никамăн та йывăрлăхра пуç усмалла мар. Çынпа чуна уçса калаçмалла, хăвăр валли чун уççи ĕç тупмалла, çав самантра «симĕс çĕлен» пирки пачах та шутламалла мар, – тарăн шухăша путрĕ çамрăк хĕрарăм, тунсăха сирес тесе çийĕнчех сăвă çаврăмĕ шăрçаларĕ.

Вăхăт иртнĕçемĕн унăн Наташа хĕрĕ кун çути курать. Кирек епле амăшĕ пекех ачан çутă пуласлăхĕ пирки ĕмĕтленет хĕрарăм, пурнăç тĕрекĕ пуласса шанать, анчах...

– Тен Турри çапла çырнă пулĕ. Атăл шывĕ урлă ишсе каçнă пулсассăн тен пулĕччĕ урăхларах шăпам, – сенкер тӳпере тем шыранă евĕр тинкерчĕ çӳлелле Татьяна.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Т. Васильева хайлавĕ

Пуçăмра яланах ман пĕр шухăш,
Мĕншĕн-ха ялан çапла пулать?
Пĕри телейлĕ, савăк пурнăç,
Çав вăхăтра тепри асапланать.
Çĕр çинче пĕрре кăна пурнатпăр,
Яланах ыррине кăна ĕмĕтленсе.
Янкăр çутă куншăн савăнатпăр,
Унăн илемĕпе киленсе.
Анчах çак уяр çанталăкра та
Чуна пит йывăр тепĕр чух.
Хăвна хăв епле сыхласан та
Çапса хуçать-çке йывăр чир.
Пуçланать вара асаплану саманчĕ,
Питĕ йывăр-çке ун пек чух мана.
Асап курман çын ăна ăнланмĕ,
Ăнланман çынна мĕн-ма калас.
Эп пĕлетĕп, пĕччен пит йывăр пулĕ,
Мана вара пĕр шухăш канăççăрлантарать.
Калăпăр, сыв мар çынпа эсĕ пĕрлешрĕн,
Канăçа çухатмăн-ши кайран?
Пурнăç çулĕ такăр пулмасан та
Вăй-хал патăр пире Турри пурăнма.
Пуçа усас марччĕ нихăçан та,
Çухатас марччĕ нихăçан шанăçа.

Объявления

Управление капитального строительства, архитектуры и ЖКХ администрации Моргаушского района, находящееся по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, каб. 207 объявляет о проведении конкурсного отбора на перевозку пассажиров по следующему автобусному маршруту:

Моргауши – Нискасы – Чемеевский поворот – 25,0 км.

Для участия в конкурсном отборе допускаются юридические и физические лица, зарегистрированные в качестве индивидуальных предпринимателей, своевременно представившие конкурсную заявку, надлежащим образом оформленные документы, а также выполнившие все требования, предусмотренные условиями конкурса.

Для участия в конкурсе претенденты подают конкурсную заявку, запечатанную в конверт, представляющую собой комплект следующих документов:

заявку на участие в конкурсе;

сведения об имеющемся опыте;

копии учредительных документов и документа о государственной регистрации – для юридических лиц и ИП;

копии бухгалтерской отчетности за предыдущий год и истекший квартал текущего года;

подтверждение территориального органа Федеральной налоговой службы по месту государственной регистрации претендента об отсутствии просроченной задолженности по платежам в бюджет и внебюджетные фонды, в том числе по штрафам и финансовым санкциям;

подтверждение финансового отдела администрации Моргаушского района об отсутствии просроченной задолженности по ранее предоставленным бюджетным кредитам;

копия лицензии на осуществление перевозок;

сведения о наличии транспортного средства не менее 2-х на маршруте;

Указанные документы скрепляются подписью и печатью претендента.

Весь пакет документов предоставляется до 17-00 часов 12 января 2012 г. в УКС, архитектуры и ЖКХ администрации Моргаушского района, каб. 207 по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, тел. 62-4-39, контактное лицо по приему заявок Звонков Н.Л.

Конкурс состоится 13 января 2012 года в 10.00 часов в каб. 206 администрации района.

***

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики 18 ноября 2011 года провела аукцион, открытый по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики. Основание: постановления администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 11.10.2011 №1083, от 11.10.2011 №1084. Победителем по лоту №1 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:170205:147, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, площадью 4525 кв.м.) признан Сретинский Сергей Кронидович. Победителем по лоту №2 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:220301:127, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Ягаткино, ул. Ф. Тимофеева, площадью 4000 кв.м.) признана Тимофеева Ирина Владиславовна. Победителем по лоту №3 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:220301:128, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Ягаткино, ул. Ф. Тимофеева, площадью 4000 кв.м.) признана Коновалова Галина Ивановна. Победителем по лоту №4 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:070402:110, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Сесмеры, площадью 84 кв.м.) признано Большесундырское райпо. Победителем по лоту №5 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:090604:56, местоположение: Установлено относительно ориентира, расположенного за пределами участка. Ориентир строение. Участок находится примерно в 70 м от ориентира по направлению на юго-запад. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Москакасы, ул. Озерная, дом 3, площадью 5350 кв.м.). Победителем по лоту №6 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:080601:47, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Елкино, площадью 542 кв.м.) признана Полякова Татьяна Александровна. Победителем по лоту №7 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:100701:133, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Оринinformationское сельское поселение, земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:100701, площадью 4000 кв.м.) признана Ораина Тамара Ивановна. Победителем по лоту №8 (земельный участок с кадастровым номером 21:17:060401:562, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, площадью 36 кв.м.) признан Титов Александр Михайлович.

***

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1591, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:072501, для сельскохозяйственного производства, площадью 56400 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

***

